# Хĕрарăм тивĕçне туллин пурнăçланă

**Чăваш АССР çут ĕç министрĕ пулнă Дмитрий Егоров иртнĕ çулсенче 4 томран тăракан “Женщины – матери земли чувашской” кĕнеке пичетлесе кăларчĕ. Вĕсемпе паллашса республикăри мухтавлă ача амăшĕсем çинчен эпир нумай пĕлме пултаратпăр. Сăмах май, Етĕрне районĕнче “Амăшĕ – героиня” ята тивĕçнисем 25-ĕн шутланаççĕ. Вулакансене Хупахушкăнь ялĕнче пурăнакан 80-ри Елизавета Васильевна Михайлова тата унăн 10 ачи пирки каласа парасшăн.**



*Ывăлĕсем.*



*Амăшĕ.*

Вăтам пӳ-силлĕ маттур хĕр асăннă ялта çуралса ӳснĕ. Вăхăт çитсен юнашарти Мăн Яваш шкулне утнă, каникулта колхоз ĕçне хутшăннă. Çулсем шунă. Хĕре ялти Санькка-купăсçă сăнасах тăнă. Ăна çав тери юратнă иккен. Тантăшсем шкулта та пĕрле вĕреннĕ, колхоз уй-хирĕнче те, вăйă картинче те юнашар пулма тăрăшнă. Юрату амалансах пынă. Çуллахи каçсенче çамрăксем урама тухнă: вылянă, кулнă, савăннă. Санькка вĕсене балалайка, купăс, мандолина кĕввисемпе юрлаттарнă, ташлаттарнă.

22-ри Лисукпа Санькка 1951 çулта çемье чăмăртаççĕ. Ачисем çуралма тытăнаççĕ: çулсерен тенĕ пекех, пĕрин хыççăн тепри, 7 ывăлпа 3 хĕр çут тĕнчене килеççĕ. Юрату “çимĕçĕсем” кил-çурта тултараççĕ, мăшăра савăнтараççĕ. Паллах, ачасене пăхса ӳстерме, ура çине тăратса пурнăç çулĕ çине кăларма çăмăл мар. Михайловсем йывăрлăха çĕнтерни. Çемьери килĕшӳпе туслăхра ачасем ырă чун-чĕреллĕ ӳснĕ. Ашшĕ-амăшĕ вĕсене килти тата колхоз-совхозри ĕçсене пĕчĕклех хăнăхтарса пынă. Шел, 46 çула çитсен Александр Михайловичăн чĕри тапма чарăннă. Кĕçĕн хĕрĕ Зоя ун чухне 1-мĕш класа çеç çӳренĕ.

Мăшăрĕпе чĕрĕк ĕмĕре яхăн çеç пурăнса юлнă Лисук аппа. Унăн пĕртен-пĕр тĕллев: ачасене тĕрĕс воспитани парса çитĕнтермелле...

Сисĕнмесĕрех тепĕр 34 çул иртсе кайнă. Çак тапхăрта кинемейĕн чунĕ лăпланать – ачисем пурнăç çулĕ çине тухса çемьеленеççĕ. Вĕсем çине тăнипех тĕп килти çурт, ытти хуралтă çĕнелсе улшăнаççĕ. Вунă ача амăшĕ хăйĕн саккăрмĕш ывăлĕпе Мишăпа, кинĕпе Алинăпа тата вĕсен виçĕ ачипе çакăнта киленсе пурăнать. Сывлăхĕ те, кăмăлĕ те çирĕпха хисеплĕ çыннăн.

Михаил – клуб заведующийĕ. Ашшĕ пекех купăс ăста калать, ял халăхĕн канăвне йĕркелесе пырать.

Пĕр тăвансем пĕр-пĕрне манмаççĕ, амăшĕ патне те килсех çӳреççĕ. Пурнăç парнеленĕ юратнă çыннине чунчĕререн тав тăваççĕ, парнесем параççĕ, тутлă çимĕçпе сăйлаççĕ.

Çемье – çĕршыв пуянлăхĕ тата унăн çирĕплĕхĕ. Çакна Михайловсен йышлă та туслă çемйи тепĕр хут çирĕплетет. Паянхи çамрăк мăшăрсен вĕсенчен тĕслĕх илмелле.

■ **Геннадий САВЕЛЬЕВ**